Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

13 (7757) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи февралĕн (нарăс) 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Район кунне уявларăмăр

## Ăнăçу никĕсĕнче ĕç тăрать



Район кунĕнче «Районăн хисеплĕ гражданинĕ» чыса тивĕçнĕ Платон Павлович Давыдов Раççей Геройĕпе Евгений Германович Борисовпа тата Социализмла Ĕç Геройĕпе Ольга Федоровна Федоровапа.

Иртнĕ шăмат кун, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕнче, Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче Муркашсем пĕрле пухăнса районăмăрăн черетлĕ çуралнă кунне паллă турĕç. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи кĕрленĕ 1944 çулхи нарăс уйăхĕнче çĕнĕ тытăмра пĕрремĕш утăм тунă Муркаш Ен паян чылай ĕçре ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Çакă район тулашĕнче çеç мар, республика чиккинчен тухсан та аван курăнса тăрать. Çавăнпа та Муркашсемпе туслă çыхăну йĕркелес текенсем те малалла пăхса ĕçлекенсем хушшинче чылай. Ку вара çĕнĕ ĕмĕтсем çуратать.

Районăмăр 66 çул тултарнă ятпа ирттернĕ савăнăçлă пуху кăçал район тулашĕнче мар, хамăр тăван килтех иртрĕ. Палăртнă вăхăта пур ĕç коллективĕсен делегацийĕсем те Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрне пухăнса çитрĕç. Халăх йышлă çӳремелли вырăнсенче районти культурăпа архив ĕçĕсен пайĕ йĕркеленĕ выставкăсем, Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсем пуçарнă суту-илӳ тата кунти техĕмлĕ кукăль шăрши уяв чаплăлăхне ӳстерчĕç кăна.

Вăхăт çитнипе культура ĕçченĕсем уяв кунне пуçларĕç. Малтанах зала пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов район историйĕпе паллаштарнă май Муркаш Енĕн иртнĕ çулхи социаллă-экономика аталанăвĕн утăмĕсене пĕтĕмлетрĕ. Район ял хуçалăх продукцине туса илессипе специализациленнĕрен, кунти ӳсĕмсем те пит хĕретмеллисем мар. Районта пурăнакансем пĕлтĕр ял хуçалăх продукцине пĕтĕмпе 1 миллиард та 645 миллион тенкĕлĕх туса илнĕ. Уйрăммăн илсен, тырă-пулă туса илессине виçĕм çулхинчен 15 процент (5 пин тонна) ӳстерсе 35 пин тоннăна, çĕр улмине 3,9 процент ытларах туса илсе пĕтĕмĕшле кăтартăва 58,3 пин тоннăна çитернĕ. Ку вăл Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнчи ял хуçалăх производствин ӳсĕм утăмĕсем.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).

Аслă Çĕнтерĕве – 65 çул

## Вăрçă ветеранĕсем çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатĕç. Вĕсенчен хăшĕсем?

***Кĕçех Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитет. Пирĕн çĕршывра аслă ăрури çынсене пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Юлашки çулсенче пенси законодательствинче пулса иртнĕ улшăнусем те çакнах çирĕплетсе параççĕ. Кăçалхи январĕн 9-мĕшĕнче вара вăрçă вучĕ витĕр тухнă ватă салтаксемшĕн тепĕр ырă хыпар пулчĕ: çак кун РФ Президенчĕ Д.А. Медведев маларах йышăннă «Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессишинчен» документа улшăнусем кĕртесси çинчен Указ кăларчĕ.***

***Мĕнлерех улшăнусем вĕсем? Çак тата вăрçă ветеранĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе çыхăннă ытти ыйтусем тавра калаçрăмăр та ĕнтĕ Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçин çумĕпе А.Н. КУЗЬМИНПА. Калаçу вара халь çеç тӳрремĕн лартнă ыйту хуравĕнчен пуçланчĕ. Акă мĕнле хурав пачĕ ун çине Анатолий Николаевич:***

– Ку таранччен 2005 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă вăрçă ветеранĕсем çеç хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултарнă пулсан, халĕ çак чикĕлеве пăрахăçланă. Апла пулсан, ку ыйтупа кирек хăш вăхăтра черете тăнисене те федераллă бюджет укçи-тенкипе çурт-йĕрлĕ пулма пулăшаççĕ. Ку вăл пĕрремĕш улшăну.

Асăннă Указ тата тепĕр çĕнĕлĕх те кĕртрĕ: унпа килĕшӳллĕн çынна сахал тупăшлă тесе шутлама май паракан нормăсем те тухса ӳкрĕç. Малтан çапла пулнă: енчен те ветерансен уйăхри пĕрлехи тупăшĕ пурăнмалли пĕчĕк минимумран иртсе кайнă пулсан, ăна çурт-йĕрпе тивĕçтермелли çăмăллатнă черете тăратман. Çавна пула нумайăшĕ черете те тăрайман. Халĕ вара ăна пăхмаççĕ, мĕншĕн тесен паян вăрçă ветеранĕсен пенсийĕ пĕчĕкех мар. Вăл вĕсене сахал тупăшлă тесе калама май памасть. Чăннипех те тивĕç вĕсем çакна.

**– Апла пулсан, çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма паян кашни ветеранăн шанăç пур?**

– Çапла, çурт-йĕр условийĕсем тивĕçтермеççĕ, вĕсене лайăхлатмалла тесе йышăннă ветерансене пӳрт лартма е туянма укçан тӳлев параççĕ.

**– Кунта тӳрех çак ыйту тухса тăрать: вăл е ку ветеранăн пурăнмалли условийĕсем япăххине мĕне кура хаклаççĕ? Камсене чăннипех çурт-йĕр кирлĕ, тесе шутлаççĕ?**

– РФ Çурт-йĕр кодексĕн 51-мĕш статйипе килĕшӳллĕн çакна палăртмалли никĕссенчен пĕри – ветеран пурăнакан пӳлĕмре унта регистрациленнĕ кашни çемье членĕ пуçне лекекен пĕтĕмĕшле лаптăк вырăнти хăй тытăмлăх органĕнче палăртнă учетри нормăра палăртнă лаптăкран пĕчĕк пулни. Паянхи кун ку норма пĕр çын пуçне 12 тăв. метрпа танлашать.

Ветерансем (вĕсен тăлăха юлнă мăшăрĕсем тата çемье членĕсем) пурăнакан çурта ведомствăсем хушшинчи комисси пурăнма юрăхсăр, ăна юсама тата реконструкцилеме май çук, тесе йышăнать пулсан, çавсен, чăннипех те, çурт-йĕре лайăхлатмалла, тесе йышăнаççĕ. Çурт-йĕр кирлисен шутне çавăн пекех çурт-йĕр пачах та çук ветерансем (вĕсен тăлăха юлнă мăшăрĕсем тата çемье членĕсем) кĕреççĕ.

Ветеран темиçе çемьепе пĕрле пурăнать пулсан, çемьере вăрăма кайнă йывăр чирпе чирлекен пулсан тата унпа пĕрле пурăнма май çук пулсан та ветерана çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма учета илеççĕ. Кунта мĕнле чирсем кĕнин перечение РФ Правительстви хатĕрленĕ.

**– Ветерансен çемье членĕсем, терĕр. Вĕсенчен камсем çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултараççĕ?**

– Ветеранăн çемйин членĕ шутне унпа пĕрле пурăнакан мăшăрĕ тата ачисем кĕреççĕ. Тĕслĕхрен, вăл вĕсем патĕнче прописка́ра тăрать пулсан.

Тата çакна та палăртмалла. Вăл хăйне хăй тăрантарса пурăнать е кам та пулин пăхать, пенсин кирек хăш тĕсне илтĕр е кирек мĕн чухлĕ ĕçлесе илтĕр – çаксене пăхмасăр тата çаксене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма социаллă пулăшу параççĕ: вилнĕ Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕн тата участникĕн ашшĕ-амăшне, Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнĕ вăрçă участникĕн мăшăрне, енчен те вăл тепĕр хут мăшăрланман пулсан.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Республикăра

## Кун йĕркинчи пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе

Февралĕн 24-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн ларăвĕ иртнĕ. Ăна Н. Федоров Президент ертсе пынă.

Ларура хула тăвас ĕç-хĕле йĕркелесси çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртмелли саккун проектне тишкернĕ, республикăн 2010 çулхи тата планпа пăхнă 2011 тата 2012 çулсенчи бюджетне пурнăçламалли мерăсене сӳтсе явнă, республикăн потребительсен рынокне тата пулăшу ĕçĕсен сферине аталантармалли тĕллевлĕ программине мĕнле пурнăçланине пăхса тухнă. Ял хуçалăхĕнче усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртмелли кăтартусене çирĕплетнĕ.

Ĕçпе тивĕçтересси

## Патшалăх çамрăксене пулăшать

Тин кăна профессиллĕ пĕлӳ илнĕ çамрăксене ĕçпе тивĕçтересси – пысăк ыйту. Вĕсен ĕç опычĕ çукки çак специалистсен ĕç рынокĕнчи конкурентлăхне чакарать. Ку çитменлĕхе пĕтерме районти ĕçпе тивĕçтерекен центр республикăри 2010 çул валли хатĕрленĕ тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн çамрăк специалистсене районти предприяти-организацисене стажировкăна ярассине йĕркелет.

Енчен те эсир 2009 тата 2010 çулсенче пуçламăш, вăтам тата аслă пĕлӳ паракан вĕрентӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнă пулсан, ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă хăвăр специальноçпе районти предприяти-организацисенче виçĕ уйăхлăх тӳлевлĕ стажировкăра пулма, ăс пухнине практикăра çирĕплетме пултаратăр. Ыйтусем пур пулсан, районти ĕçпе тивĕçтерекен центрăн 329-мĕш пӳлĕмĕнче кĕтетпĕр.

**Н. ВОЛКОВА, ертсе пыракан специалист.**

Кĕскен

## Аист икĕ хӳтĕлевçĕ илсе килнĕ

Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Çĕмĕрткасси ялĕнчи Михайловсен çемйине пысăк çавăнăç çитрĕ. Иртнĕ кунсенче Надежда Анатольевнапа Виталий Валерьевичăн йĕкĕреш çуралнă. Çак ятпа мăшăра район пуçлăхĕн ячĕпе ятарлă открытка парса чысланă.

Вырăс княçĕсен ячĕсемпе хунă ывăлсем – Ярославпа Святослав – сывлăхлă та тĕрĕс-тĕкел ӳссе малашне ашшĕ-амăшĕн тата çĕршывăн чăн-чăн хӳтĕлевçисем, мăнаçлăхĕ пуласса шанатпăр.

Саламлатпăр



Чи юратнă хĕрĕме – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Ираида Анатольевна КАЗАКОВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, ачусене çитĕнтерсе çул çине тăратнăшăн. Хаклăран та хаклă хĕрĕм, эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра телейлĕ туятпăр, тайма пуç сана пуриншĕн те. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр, ачусен, мăнуксен хаваслă сассине илтсе, ырлăхне курса савăнмалла пултăрччĕ.

**Саламлаканĕсем: юратнă аннӳ, йăмăку çемйипе, мăшăру, ывăлупа кинӳ, хĕрӳсемпе кĕрĕвӳсем, мăнукусем Данилпа Ксюша, мĕн пур тăванусем.**



Юратнă мăшăра, çепĕç чунлă аннене, ырă кăмăллă кукамая, хисеплĕ тăвана – Атапай ялĕнче пурăнакан **Нина Леонидовна БЛИНОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа пур кăмăлтан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Пире, ачисене, ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Аннене юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр, ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Пысăк салампа мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, прамăнукĕ Маша, тăванĕсем.**

Хаклă та юратнă çыннăмăра, хресна аннене – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Роза Сергеевна МУЗЫКОВАНА** сумлă юбилей – 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ĕç ĕмĕрĕн пысăк пайне Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра ирттернĕ. Нихăçан та ĕçрен пăрăнман.

Татах та нумай çул пире савăнтарса пурăнма сана çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр. Кун-çулу вăрăм та телейлĕ пултăр, мĕн шутлани пурнăçлантăр.

**Салампа Крючковсен, Даниловсен çемйисем, тăванĕсем.**



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, асаттене, тăвана – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Юрий Васильевич ОХОТНИКОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, тăвата ывăлĕ, кинĕсем, икĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, тăхăр мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем, тăванĕсемпе кӳршисем.**



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Ятман ялĕнче пурăнакан кăмăллă мăшăрăма, юратнă аннемĕре тата хунямана, асанне-кукамая, ялан тарават тăванăмăра – **Алиса Ефремовна ПЕТРОВАНА** – çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр, татах нумай çул пире савăнтарса пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр. Эсĕ пурришĕн эпир пурте пĕрле савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 ывăлĕпе кинĕсем, 4 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, 17 мăнукĕ, 6 кĕçĕн мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**